214 30-220

Л. Ç. СПАССĂВ

# 1930-мĕш ÇУЛХИ ÇУРАКИ КАМППАНИНЕ ХАТĔРЛЕНСЕ ИРТТЕРЕССИ ÇИНЂЕН

(1929-мĕш çулта теккапĕрĕн 14-мĕшĕнђе Ђăваш Тĕпĕçтăвкомĕн 3-мĕш çеççинђе тунă токлат).

## I. 1928-29-мĕш çулта тунă ĕçсене кăтартакан тĕп хисепсем.

Иртнĕ 1928 –29-мĕш çул пилĕк çуллăх планăн малтанхи çулĕ пулаť. Вăл çул пирĕн республĕкри пĕтĕм халăх хуçалăхĕ вăйлă ӳссе пыђĕ. Йалхуçалăхне илсессĕн, çакна каламалла: хресђен ĕçхалăхĕн пурнăçĕ çĕнĕ çулпа кайасси, çĕрĕç технĕкки çĕнелесси çак иртнĕ çул хушшинђе пит хăвăрттăн пулса пыма тапратрĕ. Акрономи куђттурĕпе çĕнĕ технĕккă ăслайĕсем пурнăçа пит те хăвăрттăн кĕрсе пыма пуçларĕç. Пур йенђен илсе пăхсассăн та, пирĕн йалхуçалăхĕ çĕнĕлле аталанасси нумай хăвăртланса карĕ. Пирĕн хуçалăх йепле хăвăрт ӳсни, хамăр тума йышăннă хăшпĕр пысăк ĕçсем пурнăçа йепле хăвăрт кĕрсе пыни тĕлĕшпе иртнĕ çул ĕлĕкхи çулсенђен нумай мала иртерет.

Пуринђен те ытла çак иртнĕ 1928—29-мĕш çул йалхуçалăхĕн сотсалисăмлă пайĕ (çектăрĕ) вăйлăланас, совхоссемпе колхоссем ӳссе сарăлас тĕлĕшрен пит паллă çул пулса иртрĕ. Ушкăнлă хуçалăхсем (колхоссем) пит те ӳссе пыраççĕ. Вырăнăн вырăнăн йалĕ йалĕпе, йе темиçе йал пĕрлешсе ушкăнлă хуçалăха куçаççĕ. Тата халĕ районĕ районĕпех ушкăнлă хуçалăха куçма пуçăнђĕç.

Колхоссем çапла ӳссе пыни пилĕк çуллăх планра хамăр хуçалăха хăпартас тесе йышăнса хунă ĕçсене кĕске вăхăтрах туса çитермешкĕн пулăшаť. Тума йышăнса хунă ĕçсем пилĕк çуллăх планра кăтартнинђен те авантараххăн пулса пырасси курăнса тăраť.

Çак иртнĕ 1928—29-мĕш çулта акăнакан çĕр шуђĕ 10 пин кектара йахăн ӳсрĕ. Ку ĕлĕк пушă выртнă çĕрсемпе усă курма тытăннăран, нумай пусса куçнăран, тата ахаљ вырттарман çĕртме анисен (курăк, паранкă анисен) шутне ӳстерсе пынинђен килђĕ.

Курăнсах тăраť ĕнтĕ, çав 10 пин кектар пирĕн республĕке ђылай тырă хушса пађĕ. Иртнĕ çулта акă акрономи ăслăлăхĕ тума хушакан ĕçсем нумай сарăлђĕç терĕмĕр. Çак майсемпе пирĕн

республёк 2 мёлйун пӑта йахӑн ытла тырӑ туса илҭӗ. Ҫак 2 мёлйун пӑт тырӑ ёнтӗ, акакан ҫӗр хисепне пысӑклатнипе, акрономи техникки ёҫӗсене сарнипе хушӑннӑскер, пит пысӑк пулӑшу паҭӗ пире. 1929-мӗш ҫулта ҫу пуҫламӑшӗ пӗртте лайӑх тӑмарӗ. Выҫлӑх пуласси пит хӑратса йанӑҭҭӗ. Есӗр хӑвӑрах пиг аван астӑватӑр ёнтӗ: ийунӗн ҫурриҭҭен пирӗн республёк тӑрӑх пӗр ҫӑмӑр та пулмарӗ, уйар ҫул пулассӑнах туйӑнса тӑҭӗ. Калҭасем пурте типшӗрсе, сарӑхса карӗҫ. Ийунӗн 2-мӗш ҫурринҭе ҫӑмӑрсем ҫурӗҫ те, хайхи хӑрушлӑх тин вара иртсе карӗ.

## 1928—29-мӗш ҫулхи плана пурнӑҫа кӗртни.

1928—29-мӗш ҫулхи плансене пурнӑҫа йепле кӗртнине илес пулсассӑн, ҫакна каламалла: плансем тӑрӑх йышӑннӑ ёҫсене иртнӗ ҫулта ҫителӗклӗ туса пынӑ. Хӑшпӗр ёҫсене планра йышӑннинҭен те ирттере, ирттере йанӑ. Кун умӗнхи ҫулпа танлаштарсан, йалхуҫалӑхне кирлӗ йапаласем епӗр ҭылай ытларах кӳнӗ. Калӑпӑр: суртлӑ вӑрлӑхсем 382 проҭҭӑн ытларах кӳнӗ, минерал ҫӑнӑхӗсем—331 проҭҭӑн, машшинсем—158 проҭҭӑн ытларах, йалхуҫалӑх кивҫенлӗхӗ тӑрӑх тата 148 проҭҭӑн нумайтарах панӑ, т. ыт. те.

Ҭыхвӑрсенҭен куратпӑр ёнтӗ: 1929-мӗш ҫулта пирӗн ӳсӗм калама ҫук пысӑк пулнӑ (13-мӗш стр. таплитсӑна пӑх).

## Сийенлекен хуртсемпе кӗрешни.

Пирӗн тата ҫакна паллӑ туса хӑвармалла: выҫлӑх пуласси хӑратнисӗр пуҫне, 1929-мӗш ҫулта уйра кӗр хурҭӗ пусӑсенҭе пит нумай курӑнни те тырпулсемшӗн хӑрушӑҭҭӗ. Ҫав ыраш хурҭӗ 7 район хирӗсенҭе сарӑлнӑ. Вӗсем пурӗ 47 пин кектар ытла ҫавӑрса илнӗ. Ку хурт кӑтартма пултарнӑ ҫав тери пысӑк инкекрен хӑтӑлас тесе, пирӗн пит хытӑ тӑрӑшса ёҫлемелле пулҭӗ. Сийенлекен хурт таврашсемпе кӗрешекен пӗтӗм аппарата, вырӑнти халӑха мопилисатсиленӗ. Ыраш акассине 10 кунлӑха тытса ҭарнӑ, пӗтӗм хура пусса тепӗр хут сухалаттарса гухтарнӑ. Ҫакӑн пирки ҫав вара епӗр сийенлекенсем кайран ытлах сийен кӑтартассинҭен хӑтӑлма пултартӑмӑр. Кӑҫал мӗн йур айне кӗреҭҭенех те калҭасем пӗтни-туни ҫинҭен хыпар пулмарӗ. Ку пире питех те савӑнтарать. 10—13 кектар калҭа пӗтни ҫинҭен пӗлетпӗр, анҭах ку калҭасем—тухнӑ приккаса итлемесӗр, хӑйсем пӗлнӗ пек акса хӑварнӑ хресҭенсен шутланать. Епӗ шутлатӑп: ку хресҭенсем хаљ ӳкӗнеҫҫӗ те пуљ ёнтӗ, сийенлекен хуртсемпе кӗрешес тесе епӗр тунӑ ёҫсем ҭӑнахах кирлӗ пулнине, вӑл ёҫсене епӗр ахаљ ҫеҫ туманнине ку хресҭенсем хаљ ӑнланса илҭӗҫ пуљ, тетӗп.

## Çитменлĕхсем.

1929-мĕш çулта пирĕн ĕçре çитменлĕхсем те пулнă. Ђи малтанах, çитменлĕхсем шутне çаксем кĕреççĕ: районсем тăрăх тунă плансене йалсенђи халăха вăхăтра пĕлтерейменни, кайа йулса çеç пĕлтерни; вăл плансенђе йалхуçалăх тăрăх тумалли ĕçсене çителĕклех кăтартса парайманни; вăл плансене сўтсе-йавнă çĕре йалти ђухăнсемпе вăтамсене çителĕклĕ таран хутшăнтарайманни; йулашкинђен тата, вăл плансем пурнăçа йепле кĕрсе пынине çителĕклĕ асăрхаса тăманни (контрођ çукки).

Тепĕр çитменлĕхĕ вăл—çынсем йарса йертсе пырасси нађартараххи. Епĕ кунта Çĕрĕç кăмиссариђĕ, йалхуçалăх копператсиоркăнĕсем, тата питрех те—вырăнсенђе ĕçлесе тăракан оркăнсем йенђен вĕрентсе кăтартса тăрасси пирки калатăп. Çак йертсе пырас ĕç нађар пиркийех тем ђухлĕ паха йышăнусем пирĕн кирлĕ таран лайăх, кирлĕ таран хăвăрт ĕçе кĕрсе пырайман.

Виççĕмĕш çитменлĕх—вăрлăх фонђĕсем тăвас пирки вырăнсенђе пит те нађар ĕçлени пулаť. Кун пирки правиттĕлстваă йенђен те, Çĕрĕç кăмиссариађĕпе ытти оркăнсем йенђен те кăтарту пулнă. Анђах, апла пулсан та, вăрлăх фонђĕ пухас ĕç çине çителĕклĕ çавăрăнса пăхман, çителĕклĕ тăрăшса ĕçлемен. Тўрех каламалла: кунашкал сўрĕк ĕçлени хађхи вăхăтра йуралла йапала мар. Кăçалхи çул пирĕн ыраш та, çуртри те çителĕклĕ. Çавăнпа тырă хатĕрлес ĕç те пит ăнăçлă иртрĕ. Респуплĕкре тыр тавраше çителĕклĕ хађ. Апла пулсассăн, ахађ йышши вăрлăхах кивçен шуђĕпе ытти кĕпĕрнесенђен, оплăçсенђен, респуплĕксенђен кўресси пирки сăмах тапратни айăпа кĕнийех пулнă пулĕђђĕ. Пирĕн çак 1930-мĕш çулта çуртри анисене хамăр вăрлăхпах шуратса хăварма тăрăшас пулаť. Кăна тумашкăн пирĕн пур условисем те, пур майсем те хатĕрех. Çак пур пек майсемпе усă курас тесе, вырăнсенђе кирлĕ таран тăрăшса ĕçлеймесен, пуçарулăхпа хастарлăха палăртмасан, тăрса йулма та пултаратпăр.

Хуçалăхра йулакан тырра хађ выђăха тăрантарма йаманха. Çавăнпа та, вăрлăх фонђĕсем тăвас ĕç тăрăх, хамăр пуçаруллăхпа хастарлăха хађ палăртас пулаť. Пирĕн шутпа, вырăнти вăрлăх фонђĕн пысăккăшĕ пĕтĕм çуртри анисене шуратма кирлĕ вăрлăхăн 20 прођђăнĕнђен кайа пулмалла мар. Ку ĕçе халех тытăнмалла. Хађ сўрĕкле мĕнле ĕçлени палăраť пулсассăн, ăна пĕтерсе лартмалла.

Тата тепĕр çитменлĕхĕ вăл—йалхуçалăх машинĕсем ыйтакансене машинсем вăхăтра, ыйтнă пеккине пĕтĕмпех парса тăманни. Машинсене халăх хушшине çителĕклĕ тăрăшсах çитерсе паманни палăраť. Çакăн пирки вара машинсем ђылайĕшĕ Çелхосснапшени

уйрӑмӗпе йалхуҫалӑх копператтивӗн склађӗсенђех вырта-вырта йулнӑ. Унсӑр пуҫне тата, машшин кӳрсе тӑратакан орканисатсисем—Ҫелхоссначшени уйрӑмӗпе Ҫеђкретсойус ку районра кайман машшинсем кӳркелени те ђылай пулнӑ. Ку та ӗнтӗ йалхуҫалӑхне вађђи машшинсем тӑратас ӗҫре пысӑк ҫитменлӗх шутланать. Тата машшинсен саппаслӑх пайӗсене ҫителӗклӗ кӳрсе тӑманнине те кӑтартса хӑвармалла.

Тата тепӗр ҫитменлӗхӗ акӑ мӗн пулать: минерал ҫӑнӑхӗсене пит кайа йулса кӳркеленӗ, йалхуҫалӑх копператси тӑрӑх пит майӗпен салатса тӑнӑ. Ҫавӑнпа минерал ҫӑнӑхӗсем пӗр касси ним усӑ кӑтартаймасӑрах йулкаланӑ. Исвӗҫ ҫӑнӑхне илӗпӗр. Исвӗҫ авӑртмалли армансем лартасси калама ҫук вӑраххӑн пулса пынӑ. Авӑртса кӑларнӑ ҫӑнӑхпа вӑхӑтра, тата пӗтӗмпех усӑ курайман. Пирӗн армансенђе авӑракан исвӗҫ ҫӑнӑхӗ ытла та хаклӑ.

Халӑх хушшинђе тумалли ӗҫсене (вӑрлӑх тасатассине, ҫӗртмене иртерех тӑвассине, ҫуртри анисене кӗркуннех сухалассине, т. ыт. те) хӑшпӗр районсенђе правиттӗлствӑ кӑтартса панӑ контрођ ђыхвӑрӗсем тулмаллӑх туса ҫитермен. Вырӑнсенђе (районсенђе, йалсенђе) ӗҫлекен йулташсем ку тӗлӗшрен вӑйа кирлӗ таран хурса ӗҫлемен, сӳрӗккӗн анђах ӗҫленӗ. Ҫакна та ӗнтӗ иртнӗ ҫулхи кампанин ҫитменлӗхӗсем шутнех кӗртес пулать.

Ҫӗр ӗҫ оркӑнӗсем, йалхуҫалӑх копператсийӗ, т. ыт. те йалти ђухӑнсемпе вӑтамсен массине ҫураки кампанин кулленхи ӗҫӗсене ҫителӗклӗ йавӑҫтарайман. Сотсиалисӑмлӑ ӑмӑртусем туса ӗҫлессине пӗртте сарса йараймаи. Йалсенђи массӑллӑ оркӑнсене, калӑпӑр—йалсовеђӗсем ҫумӗнђи ӗҫ канашлӑвӗсене, акрономи уппол номођђӑннийӗсене ку ӗҫе кирлӗ таран хутшӑнтарайман. Ҫавӑнпа та тумалли нумай ӗҫсемех лайӑххӑн иртеймен. Хӑш пӗр ђух кӗҫӗн оркӑнсем клас ҫулйӗрне пӑскаланисем пулнӑ (калӑпӑр: машшинсем тӑратас, кивҫенсем парас ӗҫре, т. ыт. те). Ҫак хаљ каласа тухни те ӗнтӗ ҫитменлӗхсен шутнех кӗрет.

Суха тумалли хатӗрсем, тата лаша ҫук ђухӑнсене ӗҫ тӗлӗшӗнђен пулӑшасси ҫине ҫителӗклӗ ҫаврӑнса пӑхман. Ҫак пулӑшӑва парас тӗлӗшпе тӑракан сатађсем тавра ђухӑнпа вӑтам хуҫалӑхсене пӗрлештерес тесе ҫителӗклӗ ӗҫлемен. Ҫавӑнпа та хӑшпӗр йалсенђе хатӗрсӗр, лашасӑр ђухӑнсен ирӗксӗрех кулак патне пуҫҫапмашкӑн каймалла пулнӑ.

Ҫак ҫитменлӗхе те, тата еп асӑнса тухнӑ ытти пур ҫитменлӗхсене те ҫитес ҫураки кампани вӑхӑтӗнђе хисепе илмелле пулать. Кӑҫалхи ҫураки кампанинђе вӗсем пӗри те пулма кирлӗ мар. Вӑл ҫитменлӗхсене пурне те пӗтермелле.

## II. 1930-мĕш çулхи йалхуçалăх кампани планĕ.

1930-мĕш çулхи йалхуçалăх планне пирĕн правиттĕлствă йышăннă ĕнтĕ. Тĕпĕçтăвком çеççийĕ ăна çирĕплетсе парĕ.

1930-мĕш çулта йалхуçалăхĕ тăрăх тумалли паллăрах ĕççем пурте ку плана кĕнĕ. План тунă ђух кашни районах хăйне ăрасна шута илнĕ. Çуракипе кĕраки кампанисем вăхăтĕнђе мĕн мĕн тумаллисем планра веçех пур. Иртнĕ çулхине епĕр çурхипе кĕрхи кампанисем ваљђи кашнинђе уйрăмшар план тунăђђĕ. Кăçал пĕр план анђах пулаŤ. Епĕр шутласа хунипе, ку план кашни колхосрах, кашни происвотствăллă копператтиврах, кашни йалтах йанвар уйăхĕн 10-мĕш ђислиђђен пулма кирлĕ. Çак тĕп план тăрăх вара кашни колхоспа кашни йалăнах хăйсене ваљђи çирĕп плансем туса хумалла пултăр, тума ђăнахах пултармалла ĕççене анђах плана кĕртмелле. Туса хатĕрленĕ плансене пĕтĕм ĕçхалăхпе пĕрле сӳтсе йавмалла. Кашни йалтах çапла лайăх сӳте сӳте йавсан, тума йышăнса хунă ĕççене пурнăçа кĕртнĕ ђух массă пит тăрăшса, мĕн тунине пĕлсе ĕçлемелле пултăр.

### Кăçалхи çураки кампанин пахалăхĕ.

Кăçалхи йалхуçалăх кампаннийĕ пĕтĕм сотсиалисăм строиттĕлствишĕн ытлах та пит паха, питĕ кирлĕскер шутланаŤ. Иртнĕ 1929-мĕш çулта йала сотсиалисăм çулĕпе çĕнетсе йарас тĕлĕшрен мĕнле мĕнле ӳсĕмсем пулнă, çав ӳсĕмсене ĕнтĕ кăçалхи кампанире пит вăйлă çирĕплетсе хăварас пулаŤ. Сотсиалисăм çулĕпе малалла тата хăватлăрах çĕнтерсе пымалла пултăр. Кăçалхи çураки кампанине ăнăçлă ирттересси политтĕкпе еккономĕк тĕлĕшĕнђен тата акă мĕн пирки пушшех те пит кирлĕ пулса тăраŤ: пиллĕк çуллăх планăн иккĕмĕш çулĕнђе хамăрăн йалхуçалăхне хăпартас, ăна сотсиалисăм çулĕпе çĕнетсе йарса улшăнтарас йенĕпе туса татмалли тĕп сатађсем йепле татăлса тухасси çак кăçалхи çураки кампанинђен питех те килет. Мĕншĕн тесессĕн, йалхуçалăхĕ тăрăх тумалли ђи паллăрах ĕççем пурте пекех çураки вăхăтĕнђе пулса иртеççĕ.

Çураки кампанине пĕтĕм ĕçхалăхне хутшăнтарса ирттермешкĕн, ку кампанийе ирттересси çине ĕççыннисене лайăхрах пăхтармашкăн, пур вăйа та ĕçе илмешкĕн кăçалхи çул условисем питех те майлă, аван темелле. Парттипе правиттĕлствă тăрăшнипе тырă хатĕрлес кампани пирĕн ĕнтĕ—пĕтĕмĕшпе илсен—ăнăçлă иртрĕ. Çавăнпа та хаљ хамăрăн мĕн пур вăйсене, мĕн пур шухăшсене çураки кампани ирттерес ĕç çине тăратма пит майлă. Пур

рапоҫҫисен хастарлăхне, пур патраксен, ҫухăнсемпе вăтам хресҫенсен, пĕтĕм совет опшҫественнăҫĕн хастарлăхне пĕр ҫĕрелле пухсан, кăҫалхи ҫураки кампанийĕ ҫăн ҫăнах та пит хăватлă, револҫутсилле хăвăртлăхпа пит пысăккăн сарăлса кайса иртмелле. Кăҫалхи кампанире тунă ӳсĕмсем хыҫҫăн йала сотсиалисăм ҫулĕпе улшăнтарса йарассине, кăпиталисăм тымарĕсене кӗкласси́не епĕр вара татах та ăнăҫлăн туса пымашкăн пултарăпăр. Ҫавăн пек ирттермелле кăҫалхи кампанийе.

### Кампанире туса татмалли сатаҫсем.

Кăҫалхи кампанире ак ҫак тĕп сатаҫсене туса татмалла пулаť: 1) йалхуҫалăхĕн сотсиалисăмлă пайне (совхоссемпе колхоссене) малашне те хăвăрт аталантарса, пахалăх йенĕпе тĕреклентересси.

Совхоссемпе колхоссем йалхуҫалăхне тĕппинҫенех ҫĕнетсе пăрахаҫҫĕ, сотсиалисăм ҫулĕпе аталанса пымашкăн май туса параҫҫĕ. Ҫавăнпа та, акасем кампанийĕ умĕнҫе тăракан пур сатаҫсенҫен те ҫи малта тăраканĕ, ҫи тĕп сатаҫĕ вăл—совхоссепе колхоссем нумайлатас ĕҫе ăнăҫлă аталантарса йарасси пулаť.

2) Акмалли ҫĕр хисепне, тырпул тухăҫлăхне ӳстерес тесе, мĕн мĕн тумаллине пĕтĕмпех пурнăҫа кĕртесси.

3) Выҫăх-ҫĕрлĕх ĕрҫетес, выҫăх-ҫĕрлĕхе пĕрле тытса усрас ĕҫ хăвăртлăхне васкас пирки ҫине тăрса ĕҫлесси.

4) Сутлăх тавар паракан пысăк сат-пахҫа хуҫалăхне вирлĕ аталантарса йарасси, сатсемпе пахҫасен ҫĕрне пысăклатасси.

5) Йалхуҫалăх протуктисен контрактатсине вăйлăлатса йарасси; йалхуҫалăхне хăпартас, ăна ушкăнлатас ĕҫре ку контрактатси пысăк вырăн йышăнса тăрассине пĕрмай ӳстерсе пымалла.

6) Ҫухăнсене ĕҫ тĕлĕшĕнҫен вирлĕ пулăшасси, вăтам хресҫенсен хуҫалăхĕсене хăпартма пулăшасси. Пулăшнă май вĕсене тĕрлĕ ĕҫ копператтивĕсене, ушкăнлă хуҫалăхсене кĕме майсем пулса пытҫăр. Кулаксене хирĕҫ хыттăн кĕрешсе пымалла.

7) Ҫиҫҫĕмĕш сатаҫ— ҫырма таврашсене, шурсене пĕтересси шутланаť. Ку тĕлĕшрен хресҫен халăхĕн ĕҫе хăйĕн пуҫарса йарса, хăй ҫи малтан хастарланса ĕҫлемелле майсем пулҫҫăр.

Кăҫалхи акасем кампанинҫе ҫав сатаҫсене туса татас пулаť.

### Колхоссем тăвас ĕҫ.

Планăн уйрăм пайĕсене илсессĕн, ҫапла калас пулаť: 1930-мĕш ҫулшăн йышăннă плана иртнĕ ҫулсенҫисенҫен ăраснах хăвăртрах туса пымалла. Епĕ сире каларăм та ĕнтĕ: 1929-мĕш ҫулта пур

йенĕпе те епĕр 1928-мĕш çултинҗен нумай мала карăмăр, терĕм. 1930-мĕш çулта хуçалăх пайĕсене 1929-мĕш çултинҗен те нумай мала ирттересе йама шутлатпăр. Йалхуçалăхĕнҗи сотсиалисăмлă пай питех те ӳссе каймалла. Колхоссем аталанмалли плана йышăннă җух мĕнле шутланăха епĕр? Епĕр шутланă: пĕтĕм республĕк тăрăх хаљ хресҗен хуçалăхĕсем 10 проҗҗăна йахăн коллективланнă тесе. Çеççийе килнĕ Тĕпĕçтăвком җленĕсем пĕлтернĕ тăрăх та, теккапĕрĕн 10-мĕш җисли тĕлнелле вырăнсенҗе ĕç җăнахах çавăн пек тăрать.

Çапла, йалсенҗе хаљ çавăн пек пысăк улшăну пулса пырать. Çавăнпа та епĕр 1929—30-мĕш çултах җухăнсемпе вăтамсен хуçалăхĕсене рĕспуплĕкĕпе 30 проҗҗăнран кайа мар ушкăнлатмалла, тетпĕр. Ку шутласа хуни җăнах пуласси пирки сиртен нихăшĕ те иккĕленмест пуљ тесе шухăшлатăп.

Çапла епĕр хаљ 1929—30-мĕш çулта патраксемпе җухăнсене, тата вăтамсене 30 проҗҗăнран кайа мар ушкăнлă хуçалăха кĕртмелле тесе йышăннă. Ман шухăшпа, ку плана ĕçе кĕртме пултаратпăр.

| РАЙОНСЕМ | 1929 ç. 10/XII тĕлне колхоссене миçе хуçалăх кĕнĕ (% %-па) | 1930 ç. 1/X тĕлне колхоссене миçе хуçалăх кĕмелле (% %-па) | Колхоссене кĕрекен хресҗен хуçалăхĕсен шуҗĕ |
|---|---|---|---|
| Улатăр . . . . | 22 | 50 | 5249 |
| Елĕк . . . . . | 11 | 45 | 5188 |
| Аслăпатĕрйел . | 9 | 25 | 2101 |
| Вăрнар . . . . | 10 | 30 | 4493 |
| Йĕпреç . . . . | 9 | 20 | 1465 |
| Канаш . . . . | 2,2 | 15 | 2620 |
| Куславкка . . | 3 | 15 | 1165 |
| Хĕрлĕҗутай . . | 12 | 35 | 3181 |
| Кĕçĕнйелҗĕк | 17 | 75 | 4695 |
| Сĕнтĕрвăрри . | 4 | 15 | 1251 |
| Пăраҗкав . | 10 | 30 | 3570 |
| Тутаркас . . . | 3 | 35 | 3784 |
| Вăрмар . . . . | 3 | 15 | 1574 |
| Çĕрпӳ . . . . | 11 | 65 | 8391 |
| Шупашкар . . | 10 | 15 | 2065 |
| Шăмăршă . . | 1,5 | 10 | 395 |
| Йетĕрне . . . | 5 | 25 | 2366 |
| Шăнкăртан . . | 0,5 | 10 | 421 |
| Пĕтĕмпе . | 10 | 30 | 53.967 |

Хуçалăхсене ушкăнлатмалли проъ̧ъ̧ăна уйрăм районсем тăрăх паллă тунă ъ̧ухне епĕр—пĕр йенъ̧ен—ушкăнлă хуçалăх йухăмĕ йепле пынине шута илтĕмĕр. Тепĕр йенъ̧ен тата, сутăллăх куъ̧ттурсем, пахъ̧а çимĕçсем тăвас, выъ̧ăх-ъ̧ĕрлĕх ĕръ̧етес, тата ытти ĕçсем тĕлĕшĕнъ̧ен тĕрлĕ районсемшĕн мĕнле мĕнле сатаъ̧сем тăнине кисепе илнĕ. Урăхла каласан, плана епĕр районсенъ̧е ĕçлекен йулташсемпе килĕштерсе тунă.

Сотсиалисăм çулĕпе çĕнтерсе пымалли план йепле курăнатха? Ăна епĕр 1929—30-мĕш çулта тумалли пит пысăк ĕçсен планĕ тесе калатпăр. Акă ăна çак ъ̧ыхвăрсенъ̧ен курма пултаратпăр: (7-мĕш стр. пăх).

Кĕçĕнйелъ̧ĕкпе Çĕрпӳ районĕсем талкăшпех колхосланмалли районсем пулса тăраççĕ. Ку районсенъ̧е епĕр пур патраксене, пур ъ̧ухăнсене, тата вăтам хресъ̧енсене те ушкăнлă хуçалăхсене кĕртме шутлатпăр. Ђĕр тавар тăратакан тĕп районсем тăрăх та пысăк проъ̧ъ̧ăнсем йышăнса хунă. Ним каламасăрах паллă ĕнтĕ, ушкăнлă хуçалăх ĕçĕ кунашкал хăвăрт сарăласси ъ̧ухăнсемпе вăтам хресъ̧енсен хастарлăхĕ ӳснĕрен, вĕсем политтĕкпе куъ̧ттур тĕлĕшĕнъ̧ен нумай пĕле пуçланăран çакăн пек пулса тăъ̧ĕ хаъ̧. Çак çулъ̧ъ̧ен пирĕн вак колхоссем çеç шутланаъ̧ъ̧ĕç. Колхоссене пуринъ̧ен ытла ъ̧ухăнсем кайаъ̧ъ̧ĕç. Кăçалхи çул колхоса ъ̧ухăн хыççăн вăтам та карĕ. Вăтам хресъ̧енсем ушкăнĕ ушкăнĕпе колхоса çырăнаççĕ. Хаъ̧ йалта колхос пурнăçĕ кĕрлет. Колхос çинъ̧ен калаçман пĕр кĕтес те çук: пасарсенъ̧е, армансенъ̧е, улахсенъ̧е, ăçта килнĕ унта колхос çинъ̧ен калаçаççĕ. Паллах ĕнтĕ, ку колхос йухăмĕ—ман шухăшпа—ним пĕлмен çĕртенех пулса пыракан йухăм мар. Çук, апласкер мар ку йухăм. Хуçалăха ъ̧асрах хăпартмалли, йала çĕнетмелли пĕртен пĕр тĕрĕс çул вăл. Колхос, копператси çулĕ сотсиалисăм опъ̧ăлăхне илсе пыракан çул. Çакна ĕнтĕ ъ̧ухăнсемпе вăтам хресъ̧енсен масси пит лайăх тăнланса, пĕлсе çитрĕ. Çавăнпа та колхос йухăмĕ калама çук хытă сарăлса карĕ.

Тĕп вăйсене ăçта пухмалла? Ăçта пуринъ̧ен ытларах тăрăшса ĕçлемелле? Ку ыйтусене хирĕç çак таплитсă тавăрса калаť (9-ш стр. пăх):

Курăнсах тăраť ĕнтĕ, хăш районра ĕçсем ытларах, ăçта хытăрах ĕçлемелле, тĕп вăйсене те çавăнта йамалла пулаť. Капла калани вăл—план тăрăх ушкăнлă хуçалăхсен проъ̧ъ̧ăнне сахалтарах кăтартнă районсен кирек мĕнле ĕçлесен те йураť,—тени пулмасť. Ун пек ĕçленине ъ̧ăтма çук. Ку районсенъ̧е те, ушкăнлă хуçалăхсем тумалли проъ̧ъ̧ăна пысăкрах кăтартнă районсенъ̧и пекех, питĕ хытă тăрăшса ĕçлемелле. Ку районсенъ̧е те колхос йухăмне вăйлатса йамалла. Кăçан та пулин мар, çак çулах вăйлăлатса йама тăрăшмалла.

| РАЙОНСЕМ | Колхоса кӗмелли хуҫалӑхсен шуҫӗ | Колхоса хресҫен хуҫалӑхӗсенҫен миҫе проҫҫан кӗмелле |
|---|---|---|
| Ҫӗрпӳ . . . . . . | 8391 | 65 |
| Улатӑр . . . . . . | 5249 | 50 |
| Елӗк . . . . . . . | 5188 | 45 |
| Кӗҫӗнйелҫӗк . . . | 4695 | 75 |
| Вӑрнар . . . . . . | 4493 | 30 |
| Тутаркас . . . . | 3784 | 30 |
| Пӑраҫкав . . . . . | 3370 | 30 |
| Хӗрлӗҫутай . . . . | 3191 | 35 |
| Канаш . . . . . . | 2620 | 15 |
| Йетӗрне . . . . . | 2366 | 25 |
| Аслӑпатӗрйел . . . | 2101 | 25 |
| Шупашкӑр . . . . | 2068 | 15 |
| Вӑрмар . . . . . . | 1574 | 15 |
| Йӗпреҫ . . . . . . | 1465 | 20 |
| Сӗнтӗрвӑрри . . . | 1252 | 15 |
| Куславкка . . . . | 1165 | 15 |
| Шӑнкӑртан . . . . | 421 | 10 |
| Шӑмӑршӑ . . . . . | 395 | 10 |

**Пысӑк колхоссем ҫине, йалӗ йалӗпех колхоса куҫасси ҫине ытларах ҫаврӑнса пӑхар.**

Колхоссене вӑйлатас тӗлӗшпе кӑҫалхи ҫул пирӗн йалӗ йалӗпе колхоса куҫарса пырса, шултра колхоссем туса йарас йенне татӑклӑн ҫаврӑнса пӑхмалла. Ҫапла вара ҫитес вӑхӑтрах районӗ районӗпе колхоса куҫасси ҫӑмӑлланса пытӑр. 100 - 150 кектар ҫӗрлӗ вак колхоссем, сахал киллӗ, сахал вӑйлӑ колхоссем хуҫалӑха кирлӗ таран йӗркелесе йама, ӗҫ хатӗрӗсемпе, вӑйсемпе, укҫа-тенкӗсемпе лайӑххӑн усӑ курма, т. ыт. пултарaймаҫҫӗ.

Ҫавӑнпа та хуҫалӑха лайӑх тытмалли, хамӑр хуҫалӑха хӑвӑртрах хӑпартмалли, йал пурнӑҫӗпе технӗккине ҫасрах ҫӗнетсе улӑштармалли ҫи аван май вӑл—шултӑра колхоссем туни, йалӗ йалӗпех, районӗ-районӗпех колхоса кӗртсе пыни пулаť. Ҫак ҫул ҫех тӗрӗс ҫул пулаť. Ҫавӑнпа та шултӑра колхоссем тӑвасси пирӗн ӗҫре пӗрмайах паллӑ вырӑн йышӑнса тӑмалла. Паллак ӗнтӗ, колхос йухӑмӗнҫе кунашкал пысӑк утӑм тӑвас пулсан, тӗприпе вырӑнсенҫи оркӑнсен ӗҫне те урӑхлатса йарас йенӗпе пирӗн умма нумай ыйтусем тухса тӑраҫҫӗ. Калӑпӑр: колхоссенҫе патрак, тата ҫухӑнпа вӑтам хресҫен хуҫалӑхӗсем 30 проҫ-

ђăнран кайа мар тăраççĕ пулсан, çак 30 процђăн хисепленекен хуçалăхсене пулăшасси пирки тĕприпе вырăнсенђи оркăнсен халђхинђен темиçе хут пикенерех шухăшламалла пулаť. Апла пулсан, халиђђен ĕçлесе тăнă майсене пирĕн пĕтĕмпех урăхлатса çĕнетмелле пулаť. Ку тĕлĕшрен кăçалхи çулах, çине тăрса тытăнса, тĕпри оркăнсене, районрипе йалти влаççене колхоссем йеннелле, йалта халђхи вăхăтра тем тĕрлĕ хăватлă пыракан йухăм йеннелле çавăрса тăратма тăрăшас пулаť. Колхос çыннисене шкулсенђе, пуђнитсасенђе, вулав çурђĕсенђе, пиплиоттексенђе, тата ытти çĕрте те ђи малтан усă кăтартса тăмалла тăвас пулаť. Ку ĕç халђхи вăхăтра курăнмасťха: колхос çыннисем пуђнитсасенђе ыттисем пекех кĕтсе лараççĕ, тухтăрсем колхоссене пырса пăхмаççĕ, выђăх тухтăрĕсем те çавах, шкулсене те колхос çыннисен ађисене ытти ађасене илнĕ йĕркепех илеççĕ, т. ыт. те. Халĕ, киввине тĕппипех çĕмĕрсе пынă вăхăтра, пур оркăнсен те çĕннине пĕтĕм вăй-хала хурса пулăшас йенпе тĕплĕрех пăхма тытăнас пулаť. Пирĕн йалти ĕçе „малалла—шултăра ушкăнлă хуçалăхсем патнелле!“ тенĕ лосăнка пăхăнтарса пымалла. Çавăнпа та, шултăра колхоссем çинелле пур оркăнсен те, пур орканисатсисен те хытă çаврăнса пăхса ĕçлемелле.

## Йалхуçалăх копператсийĕ.

Халĕ йалхуçалăх копператси ыйтăвĕсем пирки калама тытăнатăп. Йалхуçалăх копператсинђе пирĕн халђ 79.772 хуçалăх ђлента тăраť. План тăрăх, çак кăçалхи çул патраксем, ђухăнсем, вăтам хресђенсем хушшинђен çĕнĕ ђленсем тата темиçе теçетке пин илмешкĕн шутласа хунă. Йалхуçалăх копператсинђе тăракан хуçалăхсен шуђĕ пурĕ 126.590 хуçалăх таран пулмалла. Урăхла каласан, вĕсен шутне 58 процђăн нумайлатмалла. Колхоса 30 процђăн кĕртсе çитерсен, тата копператси тăрăх çак халђ асăннă плана пурнăçа кĕртсен, хуçалăх çулĕ пĕтнĕ çĕрелле пирĕн вара патраксем, ђухăнсемпе вăтам хресђенсем пĕтĕмĕшпех копператсипе колхосра тăмалла. Копператсипе колхос ĕçĕ çав тери хăватлă сарăлни пире копператси йенĕпе çĕнĕлле, çĕнĕ майсемпе ĕçлемешкĕн хушаť. Копператси ĕçне çĕнетсе урăхлатмалла. Çак çĕнетсе урăхлатасси пирĕн халђ нађартарах пыраťха. Хăйĕн тĕп сатађĕсене туса ирттермешкĕн пирĕн респуплĕкри копператси çителĕклĕ хăнăхса çитейменха. Вăл сутас-кӳрес ĕçпе ытларах хăтланаť, йалхуçалăх протукси тăвас ĕçе халђ анђах тытăнаťха.

Çакна лайăх асра тытмалла: аван йертсе пыракансем пулмасан, колхоссем те, происвотствă йулташлăхĕсем те ĕçсене аван

йёркелесе йама пултараймаççё. Çавăнпа та колхоссемпе копператси оркависатсисене йертсе пыракансен катăрне йепле пулсан та хатĕрлесе çитермеллех. Ку ĕçе çак хĕл хушшинђех вăйлатса йамалла. Ку катăра (йертсе пыракансене) ђи лайăх патраксем, ђухăнсем, вăтам хресђенсем хушшинђен хатĕрлесе пырса, вĕсенђен çак пысăк ĕçе тивĕçлĕн йертсе пыма пултаракансем тумалла.

## Планри тĕп ђыхвăрсем.

Хăшпĕр уйрăм ĕçсем çине куçатăп. Ман шухăшпа, планри тĕп ђыхвăрсене ăнлантарса паллаштарнипе те çитет пулĕ.

Акмалли çĕр шутне епĕр 2,1 прођђăн йе 11 пин кектар ўстерме шутлатпăр. Лашасен шутне 0,54 прођђăн, măйракаллă шултра выљăха 8,8 прођђăн, сурăхсемпе кађакасене 0,23 прођђăн, сыснасене 42,58 прођђăн нумайлатмалла. Йалхуçалăхĕнђе кирлĕ машшинсем ( 1 мĕлйун та 172 пин тенкĕлĕх вырăнне) 2 мĕлйун та 680 пин 455 тенкĕлĕх сарма шутлатпăр. Ку—128 прођђăн ўсни пулаť. Нумай пусуллă çĕрсене 95 пин кектартан 203 пин кектара çитерме йе 113 прођђăн таран аслăлатма шутласа хунă. Акса тăвакан курăксене 14,5 пин кектартан 40 пин кектара çитермелле йе 176 прођђăн хушăнтармалла. Суртлă тырăсене 30.898 кектар акмалла (3 пин çурă кектар вырăнне). Минерал çăнăхĕсем 661 прођђăн нумайланмалла. Çурхи тырă вăрлăхĕсене 100 прођђăн таранах, кĕрхисене 80 прођђăн таран суртласа уйăрмалла. Пĕлтĕрхипе шутласан, вăрлăха емелпе ђўхесе тасатас ĕç кăçал 4 хут ўсмелле. Машшинпа акасси (пĕлтĕрхипе танаштарсан) 9 хут çурă ытла ўсмелле. Ирхи çĕртме анисем 36 пин кектартан 75 пин кектара çитмелле. Пушă вырттарман çĕртме анисем 5 пин кектартан 75 пин кектара çитмелле. Контрактатси 3 хут çурă ытла ўссе, пĕтĕм респуплĕк çĕрĕн 30 прођђăнне çавăрса илмелле. Сатсем 40 прођђăн, пахђасем 427 прођђăн таран хушăнмалла.

Пахђасем çинђен пĕр-ик сăмах калас. Пирĕн ку таранђђен те ĕлĕкрен пыракан йăла—кишĕрсем, панулмисем, хăйарсем вăрласси пĕтместха. Мĕнтен килетши ку? Вăл çав пахђа çимĕçсене пит те сахал тунинђен килет. Çавăнпа та кăçалхи çул пирĕн ку тĕлĕшрен кашни хресђен хуçалăхех, кашни колхосах пахђа çимĕççем пĕр хăйсене ваљљи кăна мар, тата сутлăх та тумалла тăвас пулаť. Хапрăк-савăтлă ђенттăрсем тавра, хуласем таврашĕнђе йури сутлăх çимĕçсем тăвакан пахђасем тăвас ĕçе тытăнмаллах пирĕн.

Машшинсем сарас ĕçе илĕпĕр. Иртнĕ çулта 24 пин плук сутнă пулнă, кăçал 56 пин плук сутмашкăн шутлатпăр. Тимĕр сўресем пĕлтĕр 596 сўре сутнă, кăçал 2224 сўре сутасшăн. Çейăлккăсем

пĕлтĕр 166 сутнă, кăçалхи çул 3364 çейăлккă сутма шутласа хунă. Вырмалли машшинсем пĕлтĕр 230 сутнă, çак çул 588 машшин сутасшăн. Авăн çапмалли машшинсем пĕлтĕр 308 сутнă пулнă, кăçал 871 сутасшăн. Вăрлăх тасатмалли машшинсем пĕлтĕр 732 машшин сутнă пулнă, кăçалхи çул 2617 машшин сутма шутлатпăр.

Епĕр шутласа хунисем йепле таран пысăкки çак иртсе кайнă икĕ çулпала танаштарса пăхнинђен пит аван курăнат. Ђыхвăрсем акă мĕн каласçĕ (13-мĕш стр. таплитсăна пăх).

Епĕ кашни ђыхвăр мĕнли çинђен каласа ђаранса тăмастăп, пĕр çакна анђах калатăп: хуçалăх хăвăрт ӳссе вăйланса пытăр тесен, çав ӳсĕмсем пирĕн шухăшпа кирлех, вĕсене тума май килнине кура йышăннă. Пирĕн хамăрăн пĕтĕм пултаруллă вăйа хытарса ĕçлесен, хамăр хытă ĕçлесе тăрсан, ђухăн хресђенсемпе вăтам хресђенсен пĕтĕм активне ĕçе хутшăтарсан, çав ӳсĕмсене тума пулат, пулат кăна мар, епĕр вĕсенђен иртсе те кайатпăр. Пирĕн сотсиалисăмлă ăмăрту йĕркипе усă курмалла, пур колхоссемпе совхоссенђе те, пур йалсенђе те, происвотствă копператтивĕсенђе те пĕтĕмĕшпех сотсиалисăмлă ăмăртăва сарса йамалла.

Ман шухăшпа тата çакăн çине те астуса пăхма кирлĕ: кăçалхи планра усăллăрах куљттурăсем сăмахран: йĕтĕн-кантăр, курăксем, тулă, тымарçимĕçсем, тапак тата т. ыт. нумайтарах акас тĕлĕшпе те, пысăк утăмсем тăватпăр. Çавăн пек куљттурăсем акса тăвас ĕçе сарса йарассине пирĕн уйрăмах хытă астуса пăхмалла.

## Выљăх-ђĕрлĕх ĕрђетес ĕç.

Выљăх-ђĕрлĕх ĕрђетессине пирĕн хамăрăн йалхуçалăхне выљăх-ђĕрлĕх ĕрђетес, тĕш тырă туса тăрас йеннелле çавăрса йарас тĕп сатађа кура туса пымалла. Калас пулат: выљăх-ђĕрлĕх ĕрђетес ĕç вăл пирĕн йалхуçалăхĕнђе пит пысăк, ответлă ĕç пулса тăрат. Епĕр хаљ выљăх-ђĕрлĕхе хамăр респуплĕке кирлĕ пек ĕрђетейменха, выљăх-ђĕрлĕх ĕрђетес ĕçĕн протуксийĕ çителĕклĕ мар. Пирĕн хаљ хуласемпе промышлĕннăç ђенттăрĕсене аш-пăш, сĕт-çу таврашсем тăратас ĕç ăнăçлах пымаст. Кăçалах çав ĕçе сăмахпа мар, ĕçпе хыттăн тытăнса лайăхлатма пуçламалла, ĕçлекенсене йӳн те лайăх аш, сĕт, тата сĕт протуктисем тăратас ĕçе татса памала. Çак сатаљ вăл ĕç укçипе çыхăнса тăрат. Контроља ђыхвăрĕсем çинђен токлат тăвакан: кăçал рапођђисен ĕç укçи укçан пани 8 прођђăн, ђăннипе 12 прођђăн хăпармалла, терĕ. Çак 12 прођђăнпа 8 прођђăн хишшинђи 4 прођђăн вăл рапођђисене апат-çимĕç ваљљи йӳнĕ хакпа лайăх протуктăсем илсе тăмалла тунипе пулмалла ĕнтĕ. Çав йенђен пăхсан вара, протуктăсем тăратас ĕç ђăнах та пулса

| Мӗнле ӗç, мӗнле йапала | 1928 ç. | 1929 ç. | 1930 ç | 1928 çул çумӗнҫе проҫҫӑн-па мӗн ҫухлӗ ӳсни | 1929 ç. çумӗнҫе проҫҫӑн-па мӗн ҫухлӗ ӳсни |
|---|---|---|---|---|---|
| Йалхуçалӑхне ушкӑнлатни (хуçалӑхсем) | 3.461 | 6.481 | 53 967 | 87,25 | 732,69 |
| Йалхуçалӑх копператси (ҫленсем) | 43.606 | 79772 | 126.590 | 82,93 | 58,68 |
| Акӑнакан çӗр хисепӗ (кектар) | 537.170 | 559.600 | 571.296 | 4,17 | 2,00 |
| Лашасем (миçе пуç) | 164.939 | 169.928 | 170.850 | 3,02 | 0,54 |
| Мӑйракаллӑ шултӑра выҫӑх (миçе пуç) | 244.555 | 261.730 | 284.762 | 7,02 | 8,80 |
| Сурӑхсемпе каҫакасем | 958.150 | 1013122 | 1015500 | 5,73 | 0,23 |
| Сыснасем | 152.943 | 164.328 | 234.300 | 7.44 | 42,58 |
| Çӗр ӗçлемелли машшинсем сутнӑ (миçе тенкӗлӗх) | 453.600 | 1.172.380 | 2.680.455 | 158,46 | 128,63 |
| Нумай пусса куçарнӑ çӗр хисепӗ (кектар) | 37.473 | 95.430 | 203.844 | 154,68 | 113,60 |
| Акса тӑвакан курӑк (кектар) | 6.504 | 14.508 | 40.045 | 123,06 | 176,02 |
| Суртласа акнӑ тырӑсем (кектар) | 720 | 3.502 | 30.898 | 382,36 | 782,29 |
| Минерал çӑнӑхӗсем (тоннӑпа) | 239 | 1.031 | 7.850 | 331,38 | 661,39 |
| Вӑрлӑхсем суртлани (ҫентнӗр) | 32.787 | 239533 | 700.000 | 630,57 | 192,23 |
| Вӑрлӑхсене емелпе çуни (ҫентнӗр) | 7.843 | 23.541 | 120.000 | 200,07 | 409,74 |
| Машшинпа акни (кектар) | 3.673 | 6.318 | 65.000 | 72,01 | 928,80 |
| Ирхи çӗртме (кектар) | 16.441 | 36.868 | 75.000 | 124,24 | 103,42 |
| Анасене кӗркунне сухалани (кектар) | 13.355 | 30.471 | 75.000 | 128,16 | 146,13 |
| Пушӑ вырттарман çӗртме анисем (кектар) | 1.227 | 5.191 | 7.500 | 323,06 | 44,48 |
| Контрактатси (кектар) | 3.299 | 36.602 | 167.653 | 1009,48 | 358,04 |
| Сатсем (кектар) | 2.420 | 3.160 | 4.430 | 30,57 | 40,18 |
| Пахҫасем (кектар) | 2.800 | 1.802 | 9.500 | — | 427,19 |
| Плуксем сутнӑ (штук) | 16.508 | 24.162 | 56.210 | 46,36 | 132,63 |
| Тимӗр сӳресем | 138 | 596 | 2.224 | 331,88 | 273,15 |
| Тӗрлӗ çейӑлккӑсем | 103 | 166 | 3.364 | 53,70 | 1926,50 |
| Вырмалли машшинсем | 35 | 230 | 588 | 557,14 | 155,65 |
| Авӑн çапмаллисем | 228 | 308 | 871 | 37,08 | 182,79 |
| Вӑрлӑх тасатмалли машшинсем | 409 | 732 | 2.617 | 78,97 | 257,51 |

çиттĕр тесе, вăл ĕçе тумашкăн пирĕн республĕкри пĕтĕм ĕçлекен класа, ђухăнсемпе вăтам хресђенсене пĕтĕмпех хутшăнтармалла. Ку ĕç пурнăçа кĕрсе çитмеллех. Ăна кашни рапођђийех, кашни хресђенех тăнланса илме кирлĕ, çавна астуса вара,—сĕтпе аш паракан выђăх ĕрђетес ĕçе вăйлатса, лайăхлатса йарас тĕлĕшпе ĕçлеме тытăнмалла.

## Акроминимăм.

Малалла акрономи тĕлĕшĕпе мĕн-мĕн тумалли çинђен калатăп. Ку тĕлĕшпе хамăр тума тытăннă акроминимăма ђăнах та ĕçе кĕртсе пырассине пит хытă астуса тăма кирлĕ. Кăçалхи çул епĕр акроминимăма хушса пысăклатма кирлĕ тетпĕр, сăмахран, унта выђăх-ђĕрлĕх ĕрђетес тĕлĕшпе мĕн-мĕн тума кирлисене хушмалла тесе шутлатпăр. Иртнĕ 1929-мĕш çулта акроминимăмпа кулăшла йапаласем пулкаларĕç. Райĕçтăвком претçетаттĕлĕ, йе çĕрпай пуçлăхĕ йалсовет претçетаттĕлĕсен канашлăвĕнђе: акроминимăма туса çитермелле тесе тăрăшса тăнлантарса парať, çав вăхăтрах хăйсен РĔК ђўређи патĕнђех паранкине çум пусса лартнă. Ун пек пулмалла мар. Акроминимăм ђăнах та ĕçе кĕрсе пытăр тесен, ăна йепле туса пынине хытă астуса тăмалла.

## III. Ĕçсене йĕркелесси.

Планра кăтартнă ђыхвăрсемпе ĕçсене туса çитермешкĕн ĕçе пит лайăх майлаштарса йани кирлĕ. Тумалли ĕçсене пит хытă астуса пăхсан анђах ĕçе лайăх майлаштарса йама пулať. Çак план йанварĕн 10-мĕшĕ иртиђђен кашни уйрăм колхоса, йала çитмелле, унта вăл колхоссем, вăл йалсем çав план тăрăх мĕн тумалли паллă пулмалла. Теккапĕр уйăхĕнђе йалхуçалăх протуктисем пирки контрактатси тăвас ĕçе сарса йамалла,—кашни хресђен хăйĕн мĕн тумаллине халех пĕлсе тăтăр. Контрактатси токăвăрĕ тунă тăрăх кашни ђухăн, вăтам хресђенĕн аванс шуђĕпе машшинсем, çĕр çемçетмелли емелсем, тата ыт. пулăшу та илмелле. Контрактатси токăвăрĕ вăл ахаљ хут мар. Вăл коллективисатси тăвас ĕçре, тата ђухăнсемпе вăтам хресђенсене копператтиве кўртес ĕçре пит пысăк вырăн йышăнса тăрať. Вăл çĕнĕ акрономи технĕккине тымар йама пулăшакан йапала пулса тăмалла. Вăл акроминимăма ĕçе кўртме тĕртсе пыракан йапала пулмалла.

Сотсиалисăмлă ăмăрту токăвăрĕсем тăвас тĕлĕшпе теккапĕр уйăхĕнђех ĕçлемелле. Епĕ сотсиалисăмлă ăмăрту тумасăр пĕр йал та, пĕр совхос та, колхос та, пĕр происвотствă пĕрлешĕвĕ те ан йултăр, тесе каланăђђĕ.

Халех лаша-машшин колоннисем тума, вёсене хатёрлеме пуç-ламалла. Уйрăм анасем çинђе ĕçлессине пирĕн йепле те пулин ђылайах ђакарма тăрăшмалла. Çураки ĕçĕ пĕтĕм йалти ђухăнсемпе вăтам хресђенсене пĕр колоннăра ĕçлесе иртмелле пултăр. Вăйлă колоннă туса пĕтĕм уйа машшинсемпе çавăрса илсе, ĕç хăватлăн пулса пытăр, ђухăнсемпе вăтам хресђенсен пĕтĕм масси коллектив ђăнах та хавасланса ĕçлеме пултарнине туйђђăр. Паллах, çав планра палăртнă ĕçсене пурне те тумашкăн пĕтĕм катăрсене, пĕтĕм вăйсене, пĕтĕм актива, сăмахран,—йалхуçалăх технĕккăмĕ-сенђе, хресђен çамрăкĕсен шкулĕсенђе вĕренекенсене тата ыт. те хутшăнтармалла. Колхоссене, поççолккăсен происвотствă йулташлă-хĕсене, тата ыт те йертсе пыракансем хатĕрлемелли курссем тума кирли çинђен епĕ паçăр каланăђђĕ. Тĕрлĕ курссенђе епĕр 10 пин çынтан кайа мар вĕрентсе кăларма шутлатпăр. Малалла тата пирĕн происвотствă канашлăвĕсем, конферентсисем, респуплĕк сйесĕсем, тата ыт. те тунă тăрăх, ђухăнсемпе вăтам хресђен массисене хăйсене йала сотсиалисăм майлă улăштарса лартас ыйтусене астутарса пăхтарма тăрăшмалла. Çав ĕçе пирĕн хыт-тăнах тытăнмалла. Йалти пĕтĕм патрак, ђухăнпа вăтам хресђен массине сотсиалисăм ĕçĕн пысăк сатађђисене тума хутшăнтармалла. Çав кампанире пирĕн йалсовеђĕсен ĕçне йĕркелесси çине уйрă-мах хытă астуса пăхмалла. Йалсовеђĕсене йалхуçалăх происвот-стви йеннелле, йалхуçалăхне сотсиалисăм майлă улăштарса пырас йеннелле çавăрса тăратмалла. Йалсовеђĕпе ун çумĕнђи происвотствă канашлăвĕн йала урăхлатас ĕçре тĕп орканисаттăрсем пулса тăма кирлĕ, вĕсен йалхуçалăхне çĕнетсе пырас ĕçре йертсе пыма тытăнмалла. Çапла ĕçлесе пырсан анђах епĕр шутласа хунисене туса çитерме пултарăпăр. Тӳрех калас пулаť, çав тĕлĕш-рен хаљ епĕр пит уксахлатпăр, пирĕн туса çитерменни пит нумай, кунта епĕр çителĕклех çитсе пăхман. Йалсовеђĕсем йала сотсиалисăм майлă улăштарас ĕçе туса тăђђăр тесе, вĕсен ĕçне ђĕртсе йамалла.

Çав тем пысăкĕш ĕçе епĕр клас кĕрешĕвĕ пит çивĕђленсе пынă вăхăтра туса пыратпăр. Йалти кулаксем тата совета хирĕç пыра-кан елементсем пурте çав ĕçе хирĕç пит хытă тăрĕç. Пирĕн сатађ: çавсене хирĕç пирĕн патраксене, тата ђухăнпа вăтам хресђенсене пит йĕркеллĕн пĕрлештерсе пырасси пулаť.

Патраксем, ђухăнсемпе вăтам хресђенсем пĕрлешсе тăрса кулак-сен хирĕçлĕхне вăйлăн çĕмĕрсе пымалла.

Хытă пĕрлешсе тăрса кулакла елементсене тата хытăрах тапăнса пымалла, кăпиталисăм тымарĕсене кăкласа тăкмалла.

Епӗ тата ҫураки кампанине иртерес ӗҫе хӗрарӑмсене йертесси ҫинђен каласшӑнђђӗ. Иртнӗ ҫулсенђе хӗрарӑмсем ака кампанийӗсене хутшӑнас тӗлӗшпе сат-пахђа ӗҫӗпе, ђӑх-ђӗп усрас ӗҫпе пӗрлешнӗ ерттелсем, тата урӑх йышши ерттелсем те тукаланӑђђӗ.

Ӗҫе ҫавӑн пек нађар йерсе ӗҫлесен кӑҫал сахал пулаӗ ӗнтӗ. Ӗлӗкхи ҫулсенђе хӗрарӑмсем ҫителӗклӗ йерсе ӗҫлеменни ҫав ӗҫе сахал астуса пӑхнӑ пирки пулнӑ. Хуҫалӑха ҫӗнетсе йарас пысӑк ӗҫ, сотсиалисӑмлӑ ҫӗнӗ йал тӑвас ӗҫ, респуплӗкри хресђен хуҫалӑхӗсене кӑҫалах 30 прођђӑнне колхоссене пӗрлештерес ӗҫ унта хӗрарӑмсене йертсе ӗҫлеттермесӗр иртсе кайаймаст. Есӗр пӗлетӗр: пирӗн хӗрарӑм хаљ кайра пыраӗ, ҫавӑнпа та вара хӑш ђух кулаксем, колективсен йухӑмне нийепле те ђарайманнипе, совет тума тытӑннӑ ӗҫсене хирӗҫ тӗттӗм хӗрарӑмсене кӑларса тӑратаҫҫӗ. 1929-мӗш ҫулта тӑнланман хӗрарӑмсем тухса, колхоссем тӑвассине хирӗҫ тӑнисем темиҫе те пулнӑ. Хӑшпӗр хӗрарӑмсем колхос тӑвас ӗҫ ҫинђен ҫителӗклех пӗлсе ҫитейменха, ҫавӑн пирки ӗнтӗ хӗрарӑмсем вӑл ӗҫе хирӗҫ тӑма пултарнӑ. Ӗҫ ӑнӑҫлӑ пултӑр тесен, хӗрарӑм массине вӗрентсе хатӗрлес пысӑк ӗҫе сарса йамалла. Епӗ ҫапла калатӑп: ӑҫта хаљ хӗрарӑм колхос усӑллӑ йапала иккенне тӑнланса илнӗ, пуринђен ытларах колхос хӗрарӑмшӑн хӑйшӗн усӑллине тӑнланса илнӗ — ҫавӑнпа хаљ хӗрарӑм колхос тӑвасшӑн пуринђен хастарлӑрах кӗрешет. Ђылай колхоссенђе хӗрарӑмсем малта пыраҫҫӗ, мӗншӗн тесен хӗрарӑмсем колхос хӑйсене пур йӑвӑрлӑхран та хӑтарнине, хӗрарӑм пурнӑҫне лайӑхлатса йанине, ӗҫ условисене пӗтӗмпех урӑхлатса йанине тӑнланса илнӗ.

Йулашкинђен—укҫа-тенкӗсем ҫинђен. Кӑҫал епӗр йалхуҫалӑхӗнђе тӗрлӗ ӗҫсем тумашкӑн патшалӑх укҫинђен 4 мӗлйун тенкӗ ытларах йаратпӑр. Паллах, планра йышӑннӑ ҫав пур ӗҫсене те тумашкӑн вӑл укҫа сахал. Патшалӑх пӳтшеђӗ тӑрӑх та, кивҫен парса та пулӑшнине кура пирӗн—колхоссене ђухӑнпа вӑтам хресђенсене хӑйсен укҫине ӗҫе нумайтарах кӳртме тӑрӑштармалла, хамӑр укҫана ӗҫе йарса, хастарланса ӗҫлесе кӑҫалхи ҫула йышӑннӑ пысӑк ӗҫ планне ӗҫе кӳртсе ҫитерме тӑрӑшмалла.

Пур оркӑнсемпе ӗҫҫыннисене те ӗҫе пит хытӑ астуса пӑхтарсан, хаљхи вӑхӑтра йалти ӗҫе хастарланса ӗҫлесси палӑрса тӑнӑ ђух, тата рапођђи класпа ђухӑн-вӑтам хресђенсем хушшинђе активлӑ ӗҫлекенсене пурне те ӗҫе хутшӑнтарсан, епӗр плана туса ҫитерӗпӗр, унтан иртсе те кайӑпӑр.

---

„Пирӗн йалӑн“ 3-мӗш нумӗрӗ ҫумне хушса кӑларнӑ.

Чувашлит № 104. Заказ № 72. Типография школы ФЗУ. Чебоксары. Тираж 40.000 экз.